24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ДЕКАБРЬ
3
ЮНКУН
285 (6000) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛИ СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

ЧĂВАШ КОММУНИ

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене вăхăтра юсамалла

Ĕçшěнисен çулпуçĕ Сталин юлташ отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех мĕнпур ĕçе урăхлатса çĕнетме тата мĕнпур ĕçе фронт интересĕсене пăхăнтарса пыма чĕнсе каланăччĕ. Унтанпа нумай предприятисем, учрежденисем тата колхозсем çĕнĕлле, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлеме тытăнчĕç. Заводсемпе фабрикăсенче, совхозсемпе колхозсенче кашни рабочи, кашни колхозник ик-виç çыншăн ĕçлет, нормăна икшер-виçшер хут тултарса пырать.

Пуринпĕн те паллă, вăрçа пула рабочисемпе служащисен пĕр пайне фронта мобилизациленĕ. Çавăнпа пирĕн харпăрăй выраннĕнче ывăнма пĕлмесĕр, тĕрĕ кăмăлпа ĕçлемелле. Кирек мĕнле ĕç пулсан та, кăна чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа тума тăрăшмалла. Çавăн пек чухне кăна эпир фронта тивĕçлĕ пулăшу пама пултаратпăр.

Отечественнăй аслă вăрçă социализмлă ялхуçалăхĕ умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Пирĕн ялхуçалăхăн фронта, çĕршыва çителĕклĕ таранах тырпул, аш-какай тата ытти продуктсем парса тăмалла.

Совет влаçĕ пирĕн колхозсемпе совхозсене малта пыракан техникăпа — тракторсемпе, комбайнсемпе хĕçпăаллантарчĕ. Çав машинăсемпе сарлакан та туллин усă курни ялхуçалăхĕнче ĕç тухăçлăхне тата тырпул тухăçлăхне пысăккăн ӳстерме май пачĕ. Вăрçă условийĕсенче ялхуçалăхĕнчи механизаци татах та пысăкрах выраннă йышăнса тăрать. Хĕрлĕ Çар ретне илнĕ май ялхуçалăхĕнчи работниксен йышĕ кăштах чакрĕ. Акă мĕншĕн ĕнтĕ халĕ ялта машинăсен выраннĕ уйрăмах пысăккăн ӳсрĕ. Вăрçă вăхăчĕ ялхуçалăх работникĕсенчен мĕнпур машинăсемпе татах та тухăçлăхрах ĕçлеме, çавăн пекех вĕсене лайăх пăхса усрама ыйтать.

Пирĕн республикăри чылай машинно-тракторнăй станцисем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек туса пыма тытăнчĕç, вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах хăйсен ĕçĕсене урăхлатса çĕнетрĕç. Калас пулать, Йĕпреç, Вăрнар, Чкаловски тата Шăхасан машинно-тракторнăй станцийĕсем тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана ăнăçлăн тултарчĕç. Трактористсемпе комбайнерсем халиччен пулман пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартса ĕçлерĕç.

Хальхи вăхăтра машинно-тракторнăй станцисен умĕнче татах та ответлăрах, ялхуçалăхăн çуллахи мĕнпур ĕçĕсене татса паракан задачăсем тăраççĕ. Çав задачăсенчен пĕри—тракторсемпе ытти машинăсене вăхăтра юсасси пулать.

Республикăри чылай машинно-тракторнăй станцисем тĕплĕн хатĕрленнипе октябрь уйăхĕнче тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсама тытăнчĕç. Вĕсем тракторсене юсамалли графика йĕркеллĕ тултарса пыраççĕ, шалти ресурссемпе сарлакан усă кураççĕ.

Çакна палăртмалла: иртнĕ çулта Элĕк, Ишлей, Шупашкар машинно-тракторнăй станцийĕсем машинăсене юсас тĕлĕшпе начар ĕçлерĕç, ытти-сенчен кая юлса пычĕç. Вĕсем кăçал хăйсен ĕçне урăхлатса çĕнетрĕç, вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлеме тытăнчĕç. Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн трактористсемпе рабочисем татăклă обязательствăсем илнĕ, социализмлă ăмăртăва тухнă. Ноябрĕн 25-мĕш тĕлне Ишлейри МТС тăваттăмĕш квартала 11 трактор юсас выраннине 31 трактор юсаса кăларнă, квартал планне 281 процент ытларах тултарнă. Шупашкар МТС, 18 трактор юсаса, плана 150 процент, Элĕкри МТС, 24 трактор юсаса, плана 200 процент тултарнă.

Элĕк, Шупашкар тата Ишлей машинно-тракторнăй станцийĕсенче запаслă пайсене тăçан ярса парасса кĕтсе ларамаççĕ. Вĕсем тракторсен запаслă пайĕсене выраннăй тăвассине организацилеççĕ. Сăмахран, Улатăрти МТС хывĕ пайсене 16.634 тенкĕлĕх юсанă, Канашри МТС хывĕ пайсене юсамалли плана 505 процент, Елчĕк МТС—129 процент тултарнă. Шăмăршăри МТС çĕнĕ пайсене 7084 тенкĕлĕх, Елчĕкри МТС—4.515 тенкĕлĕх тунă.

Анчах калас пулать, пĕтĕмĕшпе илсен, республикăра тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсасси çителĕксĕр пулса пырать. Уйрăм машинно-тракторнăй станцисем çак ĕçе питех вăраха ярса пыраççĕ. Ноябрĕн 25-мĕшне Вăрмар МТС тăваттăмĕш квартала юсамалли 14 трактортан пĕр трактор, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка МТС-ĕсем юсамалли 11-шер трактортан икшер трактор кăна юсанă. Асăннă машинно-тракторнăй станцисен руководителĕсем тракторсем юсас енĕпе кая юлса пынине запаслă пайсем суккине ăнлантарса пама пăхаççĕ. Вĕсем запаслă пайсене хăçан ярса парасса кĕтсе лараççĕ. Çав вăхăтрах шалти ресурссемпе усă курмаççĕ, запаслă пайсене выраннăй тăвассине организацилеме тăрăшмаççĕ.

Вăрçă условийĕсенче выраннăй ресурссемпе усă курмалла, МТС руководителĕсен пуçарулăх пулмалла. Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра запаслă пайсене кĕтсе, нимĕн тумасăр ларни пачах килĕшӳсĕр. Кашни директорăн, механикăн хăйĕн МТС хуçалăхĕнчи пурлăхсене, ресурссене тĕплĕн пĕлсе тăмалла, тракторсене хăвăртрах та пысăк пахалăхпа юсама çĕнĕрен майсем шырамалла, рационализаци ĕçне анлăн сарса пырас пулать.

Фронта кайнă трактористсем, ремонт ĕçĕнчи рабочисем выраннне çĕнĕ сынсем, уйрăмах хĕрарăмсем, йышлăн килчĕç. Вĕсен ĕç опычĕсем сахалтарах. Çавăнпа вĕсене чылай çул хушши ĕçлекен трактористсен, ремонт ĕçĕнчи рабочисен вĕрентмелле, хăйсен опытне памалла. Вĕсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса памалла.

Юлашкинчен çакна та палăртмалла, нумай машинно-тракторнăй станцисенче тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсасси çителĕксĕр пулса пырать. Уйрăм машинно-тракторнăй станцисем çак ĕçе питех вăраха ярса пыраççĕ. Ноябрĕн 25-мĕшне Вăрмар МТС тăваттăмĕш квартала юсамалли 14 трактортан пĕр трактор, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка МТС-ĕсем юсамалли 11-шер трактортан икшер трактор кăна юсанă. Асăннă машинно-тракторнăй станцисен руководителĕсем тракторсем юсас енĕпе кая юлса пынине запаслă пайсем суккине ăнлантарса пама пăхаççĕ. Вĕсем запаслă пайсене хăçан ярса парасса кĕтсе лараççĕ. Çав вăхăтрах шалти ресурссемпе усă курмаççĕ, запаслă пайсене выраннăй тăвассине организацилеме тăрăшмаççĕ.

Вăрçă условийĕсенче выраннăй ресурссемпе усă курмалла, МТС руководителĕсен пуçарулăх пулмалла. Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра запаслă пайсене кĕтсе, нимĕн тумасăр ларни пачах килĕшӳсĕр. Кашни директорăн, механикăн хăйĕн МТС хуçалăхĕнчи пурлăхсене, ресурссене тĕплĕн пĕлсе тăмалла, тракторсене хăвăртрах та пысăк пахалăхпа юсама çĕнĕрен майсем шырамалла, рационализаци ĕçне анлăн сарса пырас пулать.

Фронта кайнă трактористсем, ремонт ĕçĕнчи рабочисем выраннне çĕнĕ сынсем, уйрăмах хĕрарăмсем, йышлăн килчĕç. Вĕсен ĕç опычĕсем сахалтарах. Çавăнпа вĕсене чылай çул хушши ĕçлекен трактористсен, ремонт ĕçĕнчи рабочисен вĕрентмелле, хăйсен опытне памалла. Вĕсене ĕçлеме кирлĕ условисем туса памалла.

Юлашкинчен çакна та палăртмалла, нумай машинно-тракторнăй станцисенче тракторсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсама тытăнман. Пĕр ĕçе тепринчен уйăрса хăварамалла мар. Тракторсене юсанă вăхăтрах вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене те юсамалла.

Машинно-тракторнăй станцисен, вĕсенчи партипе комсомол тата профсоюз организацисен—мĕнпур вăя тракторсемпе ытти машинăсене вăхăтра юсас ĕçе мобилизацилемелле. Социализмлă ăмăртăва кунран-кун вăйлатса пымалла, малта пыракансен паха опычĕсене сармалла.

Сураки ăнăçлăхĕ тракторсемпе ытти машинăсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсаса хатĕрленичен килет. Çавăнпа 1942 çулти сураки пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илесси — машинно-тракторнăй станцисен чысларан та чыслă ĕçĕ пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 1-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 1-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçусем туса пынă. Хĕвеланăç фронтĕнче противника пысăк çухатусем кӳрсе, унăн темиçе хваттерлĕ сирсе пăрахнă. Фронтăн Ростов участокĕнче совет войскисем нимĕçсен войскисене малалла хăваласа пыраççĕ. Унта çĕнĕ трофейăсем тытса илнĕ.

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче нимĕçсен 59 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн — 17 самолет пĕтнĕ.

Декабрĕн 1-мĕшĕнче Мускав патĕнче пирĕн зенитнăй артиллери нимĕçсен 4 самолетне персе антарнă.

• • •

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕçсен 215 танкне, 6 бронемашинине, войскăсемпе тĕрлĕрен çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 1400 автомашинине, 34 полевой орудине, 20 минометне, çар снаряженийĕ турттарса пыракан 400 лавне, горючи тултарнă 5 автоцистернине пĕтерсе тăкнă тата стройран кăларнă, горючи усракан пысăк склада взрыв туса аркатнă тата тăшманăн пехотине 3 полка яхăн вĕлерсе пĕтернĕ, сапаласа янă.

• • •

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Березин юлташăн часĕ, противника хирĕç хаярран çапăçса, нимĕçсен икĕ танкне, 18 бронемашинине тата çар грузĕ тиенĕ 90 автомашинине, минометсен 3 батарейине, темиçе орудине тата боеприпассем турттарса пыракан 2 пысăк обозне пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 1500 çын вилсе выртса юлнă.

• • •

Сурçĕр Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Ларичев юлташ часĕнчи боецсем 8 кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсенчен халăх пурăнакан 15 пункта каялла илнĕ тата вунçĕ юсавлă танк, 16 миномет, 400 винтовка тата ытти тĕрлĕ трофейăсем нумай тытса илнĕ.

• • •

Старший лейтенантăн Еременко юлташăн кавалеристчĕсем, хăюллăн пырса тапăнса, противникăнне 130 грузовой машина, 30 çăмăл машина тата 70 мотоцикл тытса илнĕ.

• • •

Тула облаçĕнчи партизансем нимĕçсен салтакĕсене ăнăçлăн вĕлерсе пĕтерсе пыраççĕ, фашистсен çарĕн хĕçпăалĕпе транспортне пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Ч. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ пĕр ялта сиенленмесĕр юлнă икĕ сурт ăшне минăсем пырса хунă. Нимĕçсем яла йышăнса илнĕ хыççăн сывăрма çав çуртсене кĕрсе вырнаçнă. Партизансем çав çуртсене взрыв туса аркатнă, 17 гитлеровеца вĕлернĕ. Партизансен пĕрлешнĕ отрячĕсем ноябрĕн 20-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле нимĕçсен автоколонни çине пырса тапăннă. Фашистсем, хăйсен машинисем патĕнче часовойсем хăварса, канма кайнă пулнă. Партизансем шăпăн пырса часовойсене вĕлернĕ те хăйсене валли çунасем çине 12 станковăй пулемет, 85 винтовка, 20 автомат, пистолетсен ещĕкне тата боеприпассем нумай тиесе ăсатнă. Унтан фашистсен машинисене бензин сапса вут тĕртнĕ. Палатăсемпе землянкăсенчен сиксе тухакан нимĕç салтакĕсене партизансем пулеметсенчен персе тата штыксемпе чиксе вĕлере-вĕлере пĕтернĕ. Çак операци вăхăтĕнче фашистла захватчиксене мĕн пурĕ 120 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

• • •

Нимĕç салтакĕсем Хĕвелтухăç фронтĕнчен хăйсен тăванĕсем патне яракан çырусенчи шухăш-кăмăлсем кунран-кунах ытларах пусăрăнса тĕксĕмленсе пыраççĕ. Ефрейтор Вилли Гретте хăйĕн тăванĕсем патне çапла çырать: «Манăн юлташсем нумайĕшĕсем хăйсен çамрăк пуçĕсене хучĕç... Çынсем тарса пĕтнĕ, йĕриташ пĕтĕмпех юхăнса кайнă. Пирĕн умра йывăр çапăçусем тăраççĕ. Çав çапăçусенчен кам та пулин киле тавăрăнайĕ-ши, тавăрăнсассăн та хăшĕ-пĕрисем кăна тавăрăнĕç». Георг Бишоф хăй тахçан пĕрле служить тунă ефрейтор Людвиг Клумпе патне çапла пĕлтерет: «...Ывăр та хаяр çапăçусем пулчĕç. Пирĕн хушăран кам-кам пĕтни çинчен санăн пĕлес килет пулĕ. Пирĕн хушăран 23 çын пĕтрĕ. Эпĕ вĕсене ятран каласа паратăп: Генке, Леве, Видау, Френк, Керкелинг, Лендрин, Синитц, Дреспе, Рубель, Брандштеттер, Шейнеман, Лаюин, Крюгер, Альфред, Гейнц, Гальц, Ферт, Квальман, Бухвальд, Наффен. Аманнисем те 60 сынна çитрĕç. Тамăкран çăлăнса тухнисем акă эпир питĕ сахаллăн тăрса юлтăмăр. Витт та аманнă, Герберт та аманнă. Пурне те каласа çитерес те çук». Гюнтер салтак хăйĕн арăмĕ патне янă сырăвĕнче чăтма çук сивĕсем пуçланни çинчен ӳпкелешсе çырать: «Кунта юр çурĕ те ĕнтĕ... Шуйтанла сивĕ çанталăк тăрать. Эпĕ çакăн пек сивĕ Российăра мар, килте сирĕнпе пĕрле пулăттăмччĕ. Мана çалли икĕ мăшăр ăшă носки тата тепĕр мăшăр обмотка ярса пар... Сырма ирĕксĕрех пăрахма тивет, мĕншĕн тесен пӳрнесем шăнса хытса ларчĕç». Нимĕçсен офицерĕ Ганс Берлина хăйĕн арăмĕ Лотта патне çапла çырать: «Эпир питех те сахалланса юлтăмăр. Лейтенант Брендеке,—эсĕ ăна пĕлетĕнха, тата пĕр унтер-офицерпа 4 салтак вилчĕç. Эпĕ аран çеç çăлăнса тухкаларăм. Кунта пирĕн сисĕнмеллех сивĕ тăрать...»

• • •

Нимĕç захватчикĕсем оккупациленĕ Францин облаçĕсенчи хресченсене вĕçĕмех çаратаççĕ. Нумаях пулмасть фашистсем, иккĕмĕш хут ухтарса сӳресе, тырпула, йĕтĕне тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене туртса илнĕ. Сурçĕр департаментĕнче нимĕçсем хресченсен малтанхи реквизицирен юлнă лашасене тытса илнĕ.

Çавнашкал çаратакан тата ирĕксĕрлекен ирсĕр нимĕçсене хирĕç Францири патриотсен кĕрешĕвĕ ӳссех пырать. Можан ле Ретру хули таврашĕнче нумаях пулмасть хресченсенчен туртса илнĕ тырпула усракан 15 склад çунса кайнă. Уазра та тырпул усракан складсем нумай çунса кайнă. Бовэре патриотсем нимĕçсен йĕтĕн усракан складне çунтарса янă, çавăн чухне 20 миллион франклăх йĕтĕн пĕтнĕ.

Декабрĕн 2-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 2-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

• • •

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть противникăн вăй хушса панă батальонне çĕмĕрсе тăкнă, 14 миномет, 3 станковăй пулемет, оруди, 75 ещĕк патрон, пулеметсен 160 лентине тата ытти трофейăсем тытса илнĕ.

• • •

Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче совет кавалеристчĕсем противника О. ялĕнчен хĕссе кăларнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна вĕлерсе пĕтернĕ тата 3 оруди тытса илнĕ.

• • •

Совет автоматчикĕсен ушкăнĕ, красноармеец И. Ткачев ертсе пынипе, ялта вырнаçса ларнă нимĕçсем çине икĕ хутчен ăнăçлăн пырса тапăннă. Хăюллă автоматчиксем противникăн 2 миномета, 3 станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă тата 80 салтака вĕлернĕ.

• • •

Донбасăн нимĕçсем тытса илнĕ районĕсенчи партизансем фашистла окупантсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыраççĕ.

Нумаях та пулмасть К. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ нимĕç салтакĕсен ротине хирĕç çапăçнă. Партизансем фашистсене 52 çынна вĕлернĕ тата 27 çынна амантнă. Ытти-сем тарма тытăннă. Отряд пĕр ручной пулемет, винтовкăсемпе автоматсем нумай тытса илнĕ. Партизансен тепĕр отрячĕ, А. юлташ ертсе пынипе кĕрешекенскер, ялта вырнаçнă нимĕçсен ушкăнĕ çине тапăннă. Совет патриочĕсем нимĕçсене ялтан хĕссе кăларнă, çавăн чухне тăшманăн 40 салтакне вĕлернĕ. Çак отрядри боец, çамрăк шахтер Л. юлташ калама çук хăюллăн çапăçнă, вăл нимĕçсен офицерĕсемпе салтакĕсене темиçе çынна пĕтерсе тăкнă.

• • •

Фронт валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай, промышленность валли çĕртавар пама Сталин юлташ чĕнсе калани çине ответлесе, колхозсемпе машинно-тракторнăй станцисем килес çулхи вăйлă тырпулшăн большевикла тăрăшаççĕ. Чкалов облаçĕнчи пур машинно-тракторнăй станцисенче те тракторсене юсас хăвăртлăха ӳстереççĕ. Юлашки пилĕк кун хушшинче облаçра 283 трактор юсаса кăларнă. Каыл-Орда облаçĕнчи Яны-Кургански районри колхозниксем çуракине тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Вунтăвăр пин гектар кĕрхи çĕртме тунă. Районри пур колхозсенче те вăрлăх тата страховой фондсем туса хатĕрленĕ. Халĕ вăрлăхсене тасатаççĕ тата удобренисем хатĕрлеççĕ. Горно-Бадахшан автономиллĕ облаçĕнчи Шугански, Бартангски, Рошткалински тата Вахански районсенчи колхозниксем кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ, пĕтĕмпе 5.300 гектар сухалана. Вăрлăхсене тасатас, выраннти удобренисем хатĕрлес ĕç ăнăçлăн пуласа пырать. Колхозсем килес çулта тырпул акăнакан çĕрĕн лаптăкне чылай ӳстерме палăртаççĕ. Пиншер колхозниксем вĕтлĕхсене каклама тата çеремлĕ выраннсене сухалама тухнă.

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн кăнтăрти армисем тытса илнĕ трофейăсем

Нимĕçсен Клейст генералăн группинчи войскисене çапса çĕмĕрсе Ростов хулине ирĕке кăларакан тата халĕ Ростовран Хĕвеланăç еннелле наступлени туса пыракан пирĕн войскăсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: танксем — 118, орудисем — 210, пулеметсем — 306, минометсем — 178, винтовкăсем — 4.050, автомашинăсем—871 тата ытти хĕçпăшалсемпе çар хатĕрĕсем нумай тытса илнĕ.

Çак цифрăсем туллимар тата малтанлăха шутласа илнĕ сведенисем çеç пулса тăраççĕ, мĕншĕн тесен хĕрсе наступлени туса пынă вăхăтра пĕтĕм трофейăсене тĕплĕн шута илсе тухмаç май çук.

Генерал-майор Лопатин юлташ ертсе пыракан пирĕн 37-мĕш арми пуринчен те ытларах трофейăсем тытса илнĕ. Чăннипе илсен, çак арми, хăйĕн хăюллă çапăçăвĕсемпе, Клейст генералăн группинчи нимĕç войскисене çапса çĕмĕрес ĕçре татса паракан вырăн йышăнса тăнă.

Ростов районĕнче çичĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн самолетсемпе зенитнăй орудисем противникăнне 102 самолет персе ӳкернĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен черетлĕ пресс-конференцийĕнче

Ютçĕршыв корреспонденчĕсен декабрĕн 1-мĕшĕнче пулса иртнĕ пресс-конференцийĕнче Совет Информаци Бюровĕн начальник заместителĕ Лозовский юлташ ютçĕршыв корреспонденчĕсем лартнă ыйтусене хирĕç ответсем панă.

Корреспондентсенчен пĕри: генерал Сикорский Совет Союзне хирти пирки эсир мĕн шутлатăр?—тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответленĕ.

«Пирĕнпе туслă Польша правительствин пуçлăхĕ пирĕн пата килни, палах, паха факт пулса тăрать, мĕншĕн тесен вăл факт Совет Союзĕпе Польша республики хушшинчи туслăха çирĕплетет»,—тенĕ.

Корреспондентсенчен пĕри: Ростов патĕнче Клейстăн çарне çĕмĕрсе тăкни сирĕн шутăрпа мĕнле выраннăй тăрать?—тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла каланă: «Çакă вăл Хĕрлĕ Çар нимĕç çарне пĕрремĕш хут вăйлăн аркатни мар, çавăн пекех ăна юлашки хут аркатни тесе те пачах та шутламалла мар. Клейстăн çарне Ростов патĕнче аркатса тăкни, Германи çарне жикам та çĕнтерме пултараймасть текен легендăна пĕтерсе хурать тата урса кайнă захватчиксем малалла шăвăнса кĕрессине чарса лартать. Клейст войскисем Ростовран тухса тарнă пирки Германи командованийĕ питех те кулăшла пĕлтерӳ пичетлесе кăларчĕ. Çав пĕлтерӳре вĕсем: нимĕçсем Ростов хули центрĕнчен хула çыннисем, пĕтĕм тĕнчери правăна пăхăнмасăрах, нимĕç войскисене вăртăн пыра-пыра çапнă пирки тата «вĕсене хирĕç чи репрессиллĕ мерăсемпе кĕрешме май пултăр» тесе тухса кайнă пек ăнлантарса параççĕ. Германи командованийĕн çак ăссăр та суя заявленийĕ нимĕнрен малтан Гитлерпа унăн сывăх çыннисем пĕтĕмпех çухалса кайни çинчен тата, тепĕр енчен, Германи пропаганди маларахри вăхăтсенче: совет сыннисем нимĕç войскисене хăйсене ирĕке кăларакансем вырăнне хурса кĕтсе илеççĕ, тесе пĕлтернисем пурте суяна тухни çинчен каласа парать. Халĕ çав «ирĕке кăларакансем», хӳрисене хĕстерсе, пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле сасăпах Ростов хулинчи çынсен пархатарсăрлăхĕ пирки ӳпкелешеççĕ. Германин верховнăй командованийĕн çакăн пек ламентацийĕсем пирĕн хуласемпе ялсене тытса илнĕ нимĕç захватчикĕсен шăпи мĕнпе пĕтесси çинчен каласа параççĕ. Нимĕç вăрă-хурахĕсене эпир пĕтĕмĕшпех хăваласа ярса пĕтерсе тăкатпăр. Ку вăл пĕтĕм тĕнчери правăпа халăхсен правосознанийĕнчен иртсе кайни пулмасть. Кирек епле килхуçин те хăйĕн килне хĕçпăшалпа вăйпа тапăнса кĕрсе кайнă вăрă-хурахсене вĕлерме ирĕк пур»,—тенĕ.

Корреспондентсенчен пĕри: г. г. Курусупа Номура тата г. г. Рузвельтпа Хэлл хушшинче пулса иртнĕ каласăва эсир мĕнле хаклатăр?—тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответ панă: «Пичетре çырни тăрăх илсе пăхсан, çав малтанлăха пулса иртнĕ калаçусем нимĕнпе те вĕçленмении курăнать. Ку ыйту пирки урăх нимĕн те калама пултараймастăп, мĕншĕн тесен ман аллăмра кунтан ытла нимĕнле сведенисем те çук».

Корреспондентсенчен пĕри:—Ливири положени пирки эсир мĕн шутлатăр? — тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответленĕ: «Англи, Инди, Новая Зеланди тата Кăнтăр Африка войскисем Ливире Италипе Германи войскисене хирĕç ăнăçлăн наступлени туса пыни Африка фронтĕнчи ĕçсем Великобританишĕн çĕнтерӳллĕ пулса пынине çирĕплетет. Çав вăхăтрах вăл пирĕншĕн те усăллă япала пулса тăрать»,—тенĕ.

Корреспондентсенчен пĕри:—Японипе Совет Союзĕ хушшинчи лару-тăрура мĕнле те пулин улшăнусем пур-и? — тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответленĕ: «Эпĕ Японипе Совет Союзĕ хушшинче нимĕнле улшăнусем пулни çинчен те пĕлместĕп. Японипе СССР хушшинчи хушшăнусем апрелĕн 13-мĕшĕнче нейтралитет çинчен йышăннă пакт тăрăх йĕркеленсе пыраççĕ», — тенĕ.

Корреспондентсенчен нумайĕшĕсем:—Мускав патĕнче хальхи вăхăтра мĕнле положени?—тесе ыйтнине хирĕç Лозовский юлташ çапла ответ панă: — «Нимĕçсем 15 кун хушши ĕнтĕ Мускав çине иккĕмĕш наступлени туса пыраççĕ. Анчах та вĕсем халлĕхе пур участоксенче те пысăк çухатусем тӳснине çеç паллă тума пултараççĕ»,—тенĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен виççĕмĕш воскресникĕн итогĕсем

Тăван çĕршыв умĕнче пысăк хăрушлăх тăрать. Пирĕн государствăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕ тата никама пăхăнманлăхĕ çине килсе тапăннă фашистла тискер кайăксене хирĕç Хĕрлĕ Çар паттăрăн кĕрешет. Çав вăхăтра тылри совет халăхĕ фронта мĕн кирлине хăвăртрах та ытларах туса пама тăрăшать.

Заводра, колхозра, шкулта, чугун-çул çинче, строительствăсенче — пуç çĕрте те совет халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем кунран кун хăйсем пысăкрах тухăçлăхпа ĕçлеме пултарнине кăтартаççĕ. Вĕсенче фронтри геройсен чăнăн помощникĕсем пулас шухăш-кăмăл вĕрет. Пиншер хĕрачасем фронта кайнă арçынсен выраннне станоксемпе машинăсем умне тăраççĕ. Çамрăк патриотсем производствăра вăхăтне-мĕнне пăхмасăр, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Колхозри çамрăксем çĕршыва ытларах апат-çимĕç пама тăрăшаççĕ.

Сталин юлташ Хĕрлĕ Çара пулăшма пĕтĕм вăя мобилизацилеме чĕнсе калани çине пирĕн республикăри çамрăксем ĕçпе ответлеççĕ. Вĕсем оборона фондне тăвас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕç формисенчен пĕри воскресниксем пулса тăчĕç. Ноябрĕн 23-мĕшĕнче иртнĕ воскресник ĕçсыннисем хăйсен социализмлă тăван çĕршывне, большевиксен партине, Сталин юлташа юратнине тепĕр хут кăтартса пачĕ.

Республикăпа çав кун 139.331 çын ĕçленĕ. Вĕсем 465.630 тенкĕ укçа, 4093 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Пĕтĕм тунăша танксем тунă çĕре хывнă. Çамрăксемпе пĕрле воскресникре ватă рабочисемпе колхозниксем тата служащисем те тухнă. Шупашкар хулинче воскресникре 1.645 çын пулнă. Вĕсем 10.997 тенкĕлĕх ĕçленĕ, 90 килограмм шăлăх çырли пухнă.

Воскресник Хĕрлĕ Чутай районĕнче ăнăçлă иртнĕ. Пурĕ 15 пин çын хутшăннă, вĕсем 62.230 тенкĕлĕх, 6.970 ĕçкунĕлĕх ĕçленĕ.

Куславкка районĕнче воскресникре 5.758 çын тухнă, вĕсем 10.886 тенкĕ укçа, 439 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ.

Чкаловски районра пурĕ 3286 çын ĕçленĕ, вĕсем 3.145 ĕçкунĕ тунă. Сыхăну уйрăмĕнчи комсомолецсем хăйсен организованноçне çăтартнă. Воскресникре пурте тухнă, кашниех нормăна ытлашшипех тултарса ĕçленĕ.

Елчĕк районĕнчи колхозсенчи, учрежденисенчи, шкулсенчи çамрăксем те воскресникре активлăн хутшăнчĕ. Районĕпе 6.629 çын тухнă, 7.017 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. «Правда» колхозри комсомол организацин секретарĕ Смирнов юлташ çак ĕçе аван ертсе пынă. Вăл кун колхозра 73 çын авăн çапнă, вĕсенчен нумайĕшĕ нормăна 150—200 шер процент тултарнă.

Çамрăксен ĕçри героизмне çăтартакан çавăн пек примерсем сахал мар. Виççĕмĕш воскресникре комсомолецсемпе çамрăксем, пĕтĕм ĕçсыннисем хастарлăн та тухăçлăн ĕçлеме, ĕçлесе илнĕ укçана танксем тунă çĕре яма тăрăшнă.

Анчах хăшпĕр ВЛКСМ райкомĕсем çак пысăк мероприятие туса ирттерес ĕçе кирлĕ пек хак паман. Воскресникре çителĕклĕ таран хатĕрленсе кĕтсе илмен. Çавăнпа ВЛКСМ Кувакино райкомĕ (секретарĕ Павлов юлташ), Йĕпреç райкомĕ (секретарĕ Кузина юлташ) ку ĕçе организованно ирттерейменĕ.

Л. МИХАЙЛОВ

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Польшăн министрсен совечĕн председательне тата Польша республикин хĕçпăаллă вăйĕсен главнокомандующине генерал Сикорские йышăннă

Кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Польшăн министрсен совечĕн председательне тата Польша республикин хĕçпăаллă вăйĕсен главнокомандующине генерал Сикорские йышăннă. Сикорский генералпа пĕрле Польша посолĕ г. Кот тата Польшăн СССР территорийĕнчи çарĕн командующийĕ генерал Андерс пулнă.

Йышăнура СССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. В. Вышинский юлташ тата СССР Верховный Совет Президиумĕн секретарĕ А. Горкин юлташ пулнă.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. В. Вышинский юлташ Польшăн министрсен совечĕн председательне тата Польша республикин хĕçпăаллă вăйĕсен главнокомандующине Сикорский генерала йышăннă

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕ тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. В. Вышинский юлташ çак çулхи декабрĕн 1-мĕшĕнче Польшăн министрсен совечĕн председательне тата Польша республикин хĕçпăаллă вăйĕсен главнокомандующине Сикорский генерала хăй патне йышăннă. Унпа пĕрле йышăнура Польшăн Совет Союзĕнчи посолĕ Кот господин пулнă.

Çав кунах Вышинский юлташ ответлă визитпа хăй те Сикорский генерал патĕнче пулнă

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Чакса пыракан противника пирĕн чаçсем малалла хăваласçĕ

КАНТАР ФРОНЧĔ, ноябрĕн 30-мĕш. (Телефон тăрăх). Немĕç захватчикĕсене Дон çинчи Ростовран хăваласа кăларса, Харитоновпа Ремизов генералсен чаçĕсенчи боецсем чакса пыракан противника паян иртен пуçласах малалла хăваларĕç. Тăшман, хăйĕн чаçĕсене пирĕн войскăсем çапнă çĕртен илсе тухас тесе, кайри чаçсемпе хÿтĕленме хăтланса пăхрĕ. Анчах çаван пек хăтланни ăнăçăр пулчĕ. Хĕрлĕ Çарăн мухтавлă чаçĕсем хăвăрт малалла куçса пыраççĕ, фашистла захватчиксене тата вĕсен материальнăй чаçне пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пыраççĕ. Пĕр кун хушшинче Ремизов юлташăн чаçĕсем чылаях малалла кайрĕç, халăх пурăнакан темиçе пысăк пункт сене йышăнса илчĕç.

Ирхине 10 сехет тĕлне Харитонов юлташ чаçĕсем противника халăх пурăнакан Б. тата К. пункчĕсенчен хĕсе кăларчĕç. Гончаров юлташăн стрелковăй чаçĕ малалла ăнăçлăн куçса пырать. Кун каçиччен Гончаров юлташăн боецĕсем фашистсенчен халăх пурăнакан темиçе пысăк пункта тата питех те кирлĕ кĕпере туртса илнĕ. Алексеенко майорăн подразделенийĕнчи боецсем кăтартуллăн кĕрешеççĕ. Паян 9 сехетре ирхине Алексеенко подразделенийĕ, 10 километр хушши хăвăрт чупса тухса, халăх пурăнакан К. пункчĕ патне çитнĕ. Тăшман кĕтмен вăхăтра подразделени боецĕсем яла кĕрсе кайрĕç. Фашистсем хĕçпăшалсемпе боеприпассене пăрахса хăварса тарма тытăнчĕç. Çапăçу пынă вăхăтра Алексеенко юлташăн подразделенийĕнчи боецсем фашистсен 25 танкне тытса илчĕç. Немĕç захватчиксене К. ялĕнчен хĕссе кăларса, подразделени тата 12 километр малалла кайрĕ.

Кириченко юлташăн чаçĕнчи кавалеристсем калама çук аван кĕрешеççĕ. Вĕсем Ростова чи малтан пырса кĕнĕ, унта фашистла иртĕрсене çĕмĕрнĕ. Хăюллă юлануçăсем халĕ немĕçсен чаçĕсене малалла хăваласа пыраççĕ. Тăшман персе тăнă вырăнсенче юлануçăсем хăвăрт малалла каяççĕ те, штык вĕççĕн атака туса, фашистсене вĕсен шăтăкĕсенчен хирĕç кăлараççĕ. Пĕр кун хушшинче çапăçса пырса, Кириченко юлташăн кавалеристчĕсем 20 километр малалла кайнă, тăшмана халăх пурăнакан виçĕ пысăк пунктран хĕссе кăларнă.

Совет летчикĕсем тăшманăн автотранспортчĕ пырса капланнă вырăнсене пултарулăн шыраса тупаççĕ. Штурмласа тата бомбăсем пăрахса, вĕсем çар хатĕрĕсем тиенĕ тата лехта ларса пыракан автомашинăсене пĕтере-пĕтере тăкрĕç. Çапăçусем пулнă хирсенче немĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕршер виллисем сыртса юлчĕç. Ноябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 29-мĕшне сити вăхăтра Харитонов юлташăн участокĕнче тата ытти чылай участоксенче питех те нумай трофейăсем тытса илнĕ. Противник уйрăмăнах танксемпе автомашинăсене нумай сухатать.

Пирĕн летчиксем тăшмана пысăк сухатусем тÿстерчĕç. Çак вăхăт хушшинче вĕсем тăшманăнне 82 самолет персе антарчĕç, 147 танка, 86 орудие, 23 миномета, 24 зенитнăй установкăна, 18 броневика, горючи пултарнă 44 цистернăна, 475 лава, çынсем тата çар хатĕрĕсем туртарса пыракан 2.634 автомашинăна пĕтерсе тăкрĕç. Юлашки кунсенче илнĕ трофейăсен хисепне тĕрĕслесе палăртаççĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн чаçсем противника хирĕç кĕрешсе наступлени туса пыраççĕ. Т. юханшывĕн сылтăм енчи çыранĕнче, хÿтĕлекен пысăк чаçсене хăварса, противник Кăнтăр-Хĕвеланăç еннелле чакса пырать. Фронтăн çак участокĕнче çапăçусем çĕрле те чарăнмаççĕ. Иртнĕ каçхине пирĕн чаçсем малалла куçса пынă. Тăшман чакса пынă вăхăтрах контратакăсем тума хăтланса пăхнă. Анчах çав контратакăсене Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем ăнăçлăн сире-сире янă.

Донбасра савăлланса кĕнĕ противника хирĕç кĕрешекен пирĕн чаçсем паян ирхине наступлени тума пуçланă. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсем ăнăçлăн малалла куçса пыраççĕ. Паян ирхине 10 сехет тĕлне Шевердин юлташăн чаçĕ вăйлăн çапăçса фашистсенчен питех те кирлĕ высотана туртса илнĕ.

«Правда» хаçатăн коллективлă корреспонденчĕ—«Во славу родины» хаçат.

(«Правда», декабрĕн 1-мĕш).

Пирĕннисем 20 яла илнĕ

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, ноябрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Клин енче 12 кун хушши ĕнтĕ юн тăкăнакан хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çак участокăн вăтаçĕрĕнче те, сулахай флангĕнче те ĕнер пысăк операцисемех пулман. Туллимар даннăйсем тăрăх, Р. тата Д. районĕсенче пулнă çапăçусенче пирĕн войскăсем немĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 130 танкне, 37 орудине, 80 пулеметне тата ытти нумай тĕрлĕ хĕçпăшалĕсене пĕтерсе тăкнă. С. районĕнче совет воинĕсем ноябрĕн 28-мĕшĕнче фашистсен 20 танкне çунтарса янă, немĕç пехотине 800 çынна пĕтерсе тăкнă.

Ĕнер ирхине 7 сехетре пирĕн мухтавлă артиллеристсем Т. районĕнче тăшманăн пысăк колоннине асăрхаса илнĕ. Орудисенчен персе артиллеристсем немĕç пехоти ларса пыракан тата грузсем тиенĕ 100 автомашинăна, 50 мотоциклиста пĕтерсе тăкнă.

Волоколамск енче иртнĕ талăк хушшинче вăйлă çапăçусем пулса иртнĕ. Неприятелĕн танкĕсемпе пехотин пирĕннинчен ытларах вăйĕсем хĕссе килнине пирĕн боецсем чарса тăнă, тăшманăн малта пыракан войскисене хирĕç контратакăсем тунă.

Тăшманăн батальонĕсенчен пĕри, танксем пулăпса пынипе, М. ялĕ патне шăтарса кĕме тата ăна тытса илме пултарнă. Тăшманшăн çакă питех те хаклă ларнă. Кунта немĕçсем малалла куçса килме хăтланнисем пĕтĕмпех ăнăçăр пĕтнĕ.

Противник пирĕн стрелковăй чаçсенчен пĕрине флангран кĕрсе çавăрса илме хăтланни те ăнăçсăр пулнă. Пысăк сухатусем тÿссе, тăшман каялла чакнă.

Б. тата А. районĕсенче пирĕн кавалеристсем тăшманăн танкĕсемпе пехотине хирĕç вăйлă çапăçусем туса пыраççĕ. К. районĕнче Белобородов юлташ командир пулса ертсе пыракан совет войскисем противника хăвăтлăн пырса çапнă. Немĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна сити вĕлерсе пĕтернĕ тата Т. ялне хăйсен аллине илнĕ.

Пирĕн кавалеристсем тăшмана хирĕç хăюллă контратака туса, Н. пункта тытса илнĕ, немĕçсене темиçе километр каялла сирсе ывăтнă. Можайскпа Мало-Ярославец енĕсенче пирĕн войскăсем хăйсем малтан йышăнса тăнă оборона рубежĕсене çирĕппĕн хÿтĕлесе тăраççĕ. Ефремовпа Голубев командирсен артиллеристчĕсем малтанхи пекех лайăх ĕçлеççĕ. Иртнĕ талăк хушшинче вĕсем 10 пунктра йышлăн пухăнса тăнă немĕç войскисене сапаласа янă, артиллерин тата пулеметсен темиçе батарейине пусарса лартнă, тăшманăн нумай окопĕсемпе блиндажĕсене, вĕсенче ларакан пехотăпа пĕрлех, çапа-çапа аркатнă.

Белов юлташ командир пулса ертсе пыракан кавалеристсем К. пункт патне темиçе кун каярах шăтарса кĕнĕ немĕçсене хĕссе пынă. Немĕçсен 17-мĕш танковăй дивизийĕ, СС мотобатальонĕ тата тăшман пехотин пĕр полкĕ, К. пункт патнех сывхарса пынăскерсем, ĕнер пирĕн Хĕрлĕ кавалери хăвăтлăн пыра-пыра çапнипе кăнтăралла тата кăнтăр хĕвеланăçнелле пĕр йĕркесĕр чакма пуçланă. Немĕçсем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен çавтери пысăк сухатусем тÿсеççĕ. П. ялĕн районĕнче кăна немĕçсен 18 танк, 10 бронемашина, 20 автомашина тата салтакĕсемпе офицерĕсем питех те нумай пĕтнĕ. Кунта сывлăшри çапăçусенче тăшманăн икĕ самолетне персе антарнă.

Хальхи вăхăтра совет кавалеристчĕсем, танкистсемпе тата артиллеристсемпе таччăн çыхăнса тăрса, тăшман çине вăйлăн тапăнса пыраççĕ. Çак участокра пирĕн войскăсем 20 яла ăхăн немĕçсенчен каялла тытса илнĕ.

Доватор генерал-майорăн гвардеецĕсем Мускава хÿтĕлеççĕ

Немĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсем Мускав патне пымалли инçетри вырăнсенчи çапăçусенче çитĕнÿ тăвас шутпа юлашки кунсенче хăйсен пĕтĕм резервĕсене хăваласа килчĕç. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вăйлăн пыра-пыра çапнипе немĕçсен пыйтланса кайнă çарĕ пысăк сухатусем тÿсет. Ытти çар чаçĕсенчи боецсемпе тата командирсемпе пĕрлех, Доватор генерал-майорăн 2-мĕш гвардейски корпусĕнчи казаксем немĕçсен мухтаса пĕтернĕ çарĕсене сисĕнмеллех сиенсем кÿреççĕ.

Немĕçсен ноябрĕн 16-мĕшĕнче Мускав çине иккĕмĕш наступлени тума тытăнчĕç. Çав кун Доватор генерал-майорăн казакĕсем çакăн пек задача илнĕ: кирек мĕнле пулсан та М. рубежа тытса тăмалла, противника Волоколамск шоссе çулĕ патне ямалла мар.

Немĕçсен наступлени тăвакан танковăй дивизи чаçĕсен çак участокра çынсем те техника та пирĕннинчен чылаях нумай пулнă. Артиллерипе вăйлăн персе тăнă хыççăн фашистсен танкĕсем М. пункт çине атакăна кайнă. Немĕçсен танкĕсем хыççăн пехота пынă. Казаксем тăшмана тăвăллă вутçулăмпа кĕтсе илнĕ. Малтанхи хут залп парсанах противникăн 5 танкне пĕтерсе тăкнă, ытти сем вара пăтрашса кайнă, анчах çапах та малаллах куçса пынă.

Танксене пĕтерекен пирĕн боецсем тăшманăн хурçă тискер кайăкĕсене чăн-чăн казаксем пек кĕтсе илнĕ, вĕсем тата тепĕр 6 танка пĕтерсе тăкнă. Ытти танксем васкасах каялла çавăрăнса тарнă. Казаксем контратака тунинчен немĕç салтакĕсен хăйсен пыйтлă çурăмĕсене кăтартсах тарма лекнĕ. Вĕсем хăйсен танкĕсенчен иртсе кайсах каялла тарнă.

Пĕр полка çити пехота тата 30 танк илсе пынă хыççăн противник пирĕн чаçсене кăштах хĕссе, каç пулнă çĕре М. пункта илме пултарнă. Советăн ăшă сурчĕсенче немĕçсем канма тата ăшăнма ăмĕтленнĕ, анчах казаксем çĕрле вăйлă атака тунă та, немĕçсен пехотипе танкĕсене пĕтерсе тăкса, М. пункта каялла тытса илнĕ. Çак çапăçура фашистсен 11 танк тата салтакĕсемпе офицерĕсем 250 çын пĕтнĕ.

Çĕнĕ вăйсем илсе пырса тăратнă хыççăн, противник, мала танксене кĕртсе ярса, тул çутăласпа тепĕр участокри С. ялĕ çинелле наступлени пуçланă. Çав наступлени Доватор генерал-майорăн командирĕ пункчĕ еннелле пынă. Суранлă аллине çыхнă генерал-майор, яланхи пекех савăнăçлăскер, штаба распоряжени панă: «Пурин те немĕç танкĕсене пĕтерме хатĕрленмелле. Штаб вырăнтах юлать». Орудисенчен пени кĕрлесе кайнă. Противникăн икĕ танкĕ çунма тытăннă, ытти сем арпашса кайнă. Тепĕр çапа парса татах 4 машинăна пĕтерсе тăкнă. Тăшман атаки арканса кайнă. Немĕçсен каллех юрлă сивĕ хиртех çĕр каçма лекнĕ.

Ноябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен Доватор генерал-майорăн чаçĕсем, пирĕннинчен йышлăрах противника чарса тăрса, хăйсен рубежне çирĕп хÿтĕленĕ. Казаксем кунсеренех противника хирĕç 4—5 хутчен контратака тунă, противник пĕтĕм вăйне пухса та çитĕнÿ тума пултарайман. Тепринче кăнтăрла немĕçсем пирĕн çĕрĕн пĕр çĕр метрне тытса илме пултарнă, анчах та çĕрле вĕсем казаксен хăюллă атакисенчен тарса, кăнтăрла илнĕ вырăна каялла панă.

Казаксем-гвардеецсем каялла чакма пĕлмеççĕ. Чи йывăр, нимĕн те тума çук пек йывăр положени килсе тухсан та, казаксен чаçĕсем, Сталин ятне асра тытса, «хамăран тăван çĕршывшăн! Хамăран тăван Мускавшăн!» текен сăмахсемпе противника хирĕç хăюллă контратакăсем тăваççĕ, ăна поражени тÿстереççĕ. Немĕçсем çĕнĕрен наступлени тума тытăннăранпа малтанхи пилĕк кун хушшинче кăна Доватор генерал-майорăн чаçĕсем, пирĕн танксен чаçĕсем пулăпса пынипе, фашистсенне 84 танк, пĕр самолет, 12 оруди, немĕçсен салтакĕсемпе фицерĕсене 1.450 çын, икĕ бронемашина пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене тата хĕçпăшалĕсене чылай тытса илнĕ.

Çапăçусен опычĕ фашистла мерзавецсем çине çĕрле те, кăнтăрла та, пĕр канăç памасăр, талăк тăршшĕпех пыра-пыра çапма кирлине кăтартса парать. Пулса иртнĕ çапăçусен опычĕ çакна кăтартса парать: хĕрлĕ утлă çар, танковăй чаçсемпе вăйлатсан, активлă оборона тума та, противника пысăк сухатусем кÿме те пултарать. Тăван çĕршыв çĕрĕ çине ăна чуралăха чикес шутпа килсе кĕнĕ немĕç оккупанчĕсене иккĕмĕш гвардейски корпусри казаксем пурне те пĕр çын юлмичченех пĕтерсе пырĕç.

Майор ЧЕРНОВ.

(«Правда», ноябрĕн 27-мĕш).

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ

ИШЛЕЙ. Ишекри «Большевик» промартельри кашни çамрăк спортпа янтесленет. Темиçе çул хушши ĕнтĕ физкультура коллективĕ хăйĕн ĕçне çирĕплетсе пырать, çак ĕçре ăна комсомол организацийĕ те вăйлăн пулăшать.

Вăрçă вăхăтĕнче спорт ĕçĕ татах вăйланчĕ. Йĕлтĕр спорчĕ халĕ питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Малтанхи юр çусанах çамрăксем йĕлтĕр çине тăчĕç. Вĕсем тĕреклĕ пулса, йĕлтĕрлĕ походсене кайма хăнăхаççĕ.

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче промартельри йĕлтĕрçĕсен чи малтанхи ăмăртăнĕ пулса иртрĕ. Ăмăртăва 26 çамрăк, вĕсенчен 5 хĕр хутшăннă. Арçынсем 5 километр, хĕрарăмсем 3 километра чупса тухнă. Васильев 5 километра 26 минута хушшинче, Арбатов 27 минутăра, Кудряшова 3 километра 16 минута хушшинче, Добросмыслова 17 минутăра чупса тухрĕç.

З. МИТРОФАНОВА.

Немĕç самолечĕсем Мускав çине вĕçсе килни

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче немĕç самолечĕсен темиçе группи Мускав çине вĕçсе пыма хăтланнă. Мускав патĕнче пирĕн истребительсемпе тăшман авиацийĕ хушшинче нумай çапăсусем пулса иртнĕ. Сывлăшри çапăсусенче тата зенитнăй артиллерирен персе, немĕçсем 22 самолетне персе антарнă. Пирĕн 5 самолет пĕтнĕ.

Хула районне кĕрсе кайнă тăшманăн темиçе самолечĕ немĕн йĕркесĕр бомбăсем пăрахнă, çар объекчĕсене сиенлемен. Жертвăсем пур.

Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Ростова илни çинчен ютçĕршывсенче мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Англири пур хаçатсем те Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Ростова йышăнса илни çинчен панă пĕлтерĕве анлăн çутатса пыраççĕ.

«Дейли мэйл» хаçат: «Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Ростова йышăнса илни питех те пысăк событи пулса тăрать, çакă вăл гитлерла Германие хăватлăн пырса çапни пулать»,—тесе çырать.

«Дейли телеграф энд морнинг пост» хаçат, Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Ростова йышăнса илни Германи çарĕн верховнăй командованийĕн чапне ÿкерет, тесе çырать. Немĕçсем Ростов патĕнче поражени тÿсни Берлинра шиклентерсе, хурлантарса ÿкернĕ.

«Ростов хули татах вырăссен аллинче,—тесе çырать «Манчестер гардиан» хаçат.—Хăйсем поражени тÿснине Германи войскисен граждăнла халăхпа кĕрешме лекнипе ăнлантарса пама хăтланни Германире хăйĕнче те никама улталаман пултараймĕ. Вырăссен çак ăнăçлă ĕçĕ малашнехи ĕçсенче стратегиллĕ вырăн йышăнса тăрĕ. Çак енĕпе пăхсан, Ростова йышăнса илни питех те пысăк тата савăнăçлă событи пулса тăрать».

«Ливерпуль дейли пост» хаçат çапла çырать: «Çак çĕнтерÿ Хĕрлĕ Çарăн вăйне тата вăл хăвăрт манврсем тума пултарнине питех те уççăн кăтартса пачĕ. Паллах, вырăссен çапăçури хăвачĕ иксĕлми çирĕп, çаван пекех вĕсен çĕнĕ вăйсем нумай. Çакă вăл вырăсене хăватлă та ăнăçлăн контратака тума май пачĕ».

«Ньюс Кроникл» хаçат, Хĕрлĕ Çар Ростова йышăнса илни Германия вăрçă пуçланăранпа малтанхи хут чи пысăк поражени тÿсни пулать, тесе шутлать.

Рейтер агентствин вăрçă ĕçĕсене пăхса тăракан Губергоф генерал çапла çырать: «Тимошенкон войскисем Ростов районĕнче нацистсен чаçĕсене стратегиллĕ пысăк масштабпа ăнăçлăн пырса çапни вырăссене çак вăрçăра халиччен тунă çĕнтерÿсенчен чи пысăк çĕнтерÿ тума май пачĕ. Ростов хулине икĕ енчен наступлени туса йышăнса илнĕ. Çак операци вăл питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен çакă вăл Германин малашнехи стратегиллĕ планĕсене аркатса ячĕ. Çакă вăл вырăс çарĕсене ертсе пыракансен пысăк çар искусстви пуррине кăтартса пачĕ».

Рейтер агентствин вăрçă ĕçĕсене пăхса тăракан Амен çапла калать: «Вырăссем Ростова йышăнса илни питех те пысăк çĕнтерÿ пулса тăрать. Хăйсем Ростовран чакса тухни çинчен шарламасăр иртсе кайма хăтланнă хыççăн тата çаван пек чакни вăл партизансене хирĕç маневр туни пулать тесе ăнлантарса пама хăтланнă хыççăн, немĕçсен верховнăй командованийĕ ирĕксĕрех паян: Совет войскисем Ростов çывăхĕнче тата Донбасра массăллă атакăсем туса пыраççĕ, тесе йышăнать. Паллах, немĕçсене çавăнта аркатмаллах пырса çапнă. Маршал Тимошенко хăйĕн войскисене питех те пĕлсе пĕтĕçтерсе организацилеме пултарнă. Немĕçсен ирĕксĕрех каялла чакса тухма лекнĕ чи кирлĕ позицисенчен пĕри—Ростов пулса тăрать, çакă вăл немĕçсем халиччен çитме пултарнă хĕвелтухăçĕнчи чи инçетри пункт пулнă».

«Таймс» хаçат, немĕç войскисем Ростовран чакса тухни пирки сăмах хускатса, çапла çырать: «Противник хăйĕн тылĕнчи граждăнла халăха хирĕç пĕр шеллемесĕр репрессисем туса иртерме Ростовран чакса тухнă тесе пĕлтереççĕ пире. Паллах, хăйсем мĕншĕн чакнине çакăн пек ăнлантарса пани вăл суя япала пулса тăрать, анчах немĕçсем çавна çине тăрсах ĕнентерме тăрăшни питех те тĕлĕнтерет. Ростовран чакнă чухне хăйсем поражени тÿснине йышăнаспăн мар пулса, противник пĕтĕм тĕнчене, хăй Ростовран тылри граждăнла халăха пĕтерсе тăкма чакнă, тесе ĕнентересшĕн. Хăватлă бронетанковăй машина хăйĕн законлă противникĕпе тĕл пулассинчен çаван пек пăрăнни немĕçсемшĕн намăс марши ĕнтĕ? Çав бронетанковăй машина хăй Россия çине наступлени туса пынă çĕрте питех те кирлĕ объектсем умĕнче тăнă вĕт-ха. Çав объектсене пăрахса хăварсах ĕнтĕ немĕçсем хăйсен тылĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме каялла чакнă пулать. Çак пĕлтерÿ хăех немĕçсем хăйсене валли хăйсемех хăрушла та вĕлермелле приговор йышăнни пулса тăрать».

«Таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ, немĕçсем хальхи вăрçă пуçланăранпа çĕр çинче малтанхи хут пысăк поражени тÿсрĕç, тесе çырать. «Юлашки хыпарсем çакна кăтартса параççĕ: Ростов патĕнче пулса иртнĕ ĕç вăл эпизод кăна мар, вăл — немĕçсен суйласа илнĕ çарĕсем пысăк поражени тÿсни пулса тăрать, çакă вăл Клейст генералăн бронетанковăй чаçĕсен хăйсен тылĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме каялла чакнă пулать. Çак пĕлтерÿ хăех немĕçсем хăйсене валли хăйсемех хăрушла та вĕлермелле приговор йышăнни пулса тăрать».

«Таймс» хаçатăн Стокгольмри корреспонденчĕ, немĕçсем хальхи вăрçă пуçланăранпа çĕр çинче малтанхи хут пысăк поражени тÿсрĕç, тесе çырать. «Юлашки хыпарсем çакна кăтартса параççĕ: Ростов патĕнче пулса иртнĕ ĕç вăл эпизод кăна мар, вăл — немĕçсен суйласа илнĕ çарĕсем пысăк поражени тÿсни пулса тăрать, çакă вăл Клейст генералăн бронетанковăй чаçĕсен хăйсен тылĕнчи йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме каялла чакнă пулать. Çак пĕлтерÿ хăех немĕçсем хăйсене валли хăйсемех хăрушла та вĕлермелле приговор йышăнни пулса тăрать».

Гондар хулине парăнтарни

Ултă уйăх хушши хирĕç тăрса кĕрешнĕ хыççăн генерал Наси Гондар крепоçне Англи тата Абиссини войскисене панă, çав крепоçре 10 пин салтакран тăракан гарнизон тăнă пулнă. Çапла вара Италин Хĕвелтухăç-Африкăри колонийĕ хăйĕн кĕске те мухтавсăр ĕмĕрне вĕçлерĕ. Абиссинире халĕ Италин пĕр салтакĕ те юлман. Рим «цезарĕ» Муссолини тÿсекен машкăл татах та пысăкрах, мĕншĕн тесен Гондар хулин шăпине юлашки çапăçура Абиссини войскисем татса панă.

Абиссини Итали империализмне тахçантанпах илĕртнĕ, çавăнпа пĕрлех вăл Рим захватчикĕсемшĕн пырса тăрăна-тăрăна арканса каймалли чул пулса тăнă. 1896 çулти март уйăхĕнче Адуа патĕнче пулнă паллă çапăçура Итали войскисене Абиссини халăхĕ питех те вăйлăн пырса çапнă. Ун хыççăн Итали нумай вăхăт хушши илĕртекен государство çине тапăнмасăр тăнă, Адуа патĕнчи çапăçу вара Итали милитаристчĕсемшĕн намăсла событи пулса юлнă. 1935 çулта Абиссинине хирĕç çĕнĕ поход пуçарса, Муссолини шовинистла шавланипе Итали фашизмĕн ишĕлме пуçланă ĕçĕсене тÿрлетме шутланă.

Абиссинине çĕнсе илессишĕн Италия икĕ çула яхăн кĕрешнĕ. Начар хĕçпăшалланнă Абиссини хресченĕсене хирĕç вăрçа тухса Муссолини авиацине, танксемпе тата отравляющи япаласемпе усă курнă. Италия хăйĕн войскисене Абиссини çĕршывне питех те йышлăн илсе пырса тăратнă пулнă.

Англия Италие хирĕç вăрçă ĕçĕсем пуçарса янă вăхăтра, Муссолини Абиссинире çĕнĕ техникăпа, авиацине, танксемпе хĕçпăшаллантарнă 300 пин тонна çăмăл тата итальянецсене çĕмĕрсе тăкнă, Абиссини çĕршывĕнчен хăваласа кăларнă. Абиссинине оккупантсенчен чи кĕске срокра тасатнă.

Гондарти гарнизон Абиссинин юлашки тăвĕсене пĕтĕм вăйне хурса хăй аллинче тытса тăма тăрăшнă вăхăтра мĕн шутланă-ши? Вăл Гитлер хăйĕн союзникне, Муссолинине, пулăшасса тата Гондарти итальянецсене ирĕке кăларма Абиссинине çĕнĕрен пусмăрлăха чикме танксем ярса парасса шаннăши?! Анчах Африка пушхирĕсен тĕсĕпе сăрланă танксене хăвăрттăн вырăссен тÿрем выртакан çĕрĕн тĕсĕпе сăрлама лекнĕ, халĕ çав танксен юлашкийĕсем, хура тĕслĕскерсем, Мускав патĕнче кушаланса выртаççĕ. Çакă те сахал-ха, Италин Гондарти гарнизона пулăшма каймалли резервĕсем совет çĕршывĕн уйăхĕсенче пĕр йĕрсĕр пĕтеççĕ. Римри фашистла хаçатсем çапла çыраççĕ: Италия халĕ пысăк хуйăхра. Италия халĕ Муссолини авантюришĕн тата Итали фашисчĕсем ним мĕç фашисчĕсене хĕрхеннишĕн ответ тытать. Италия Гитлерпа çыхăнса ĕçленинчен мĕн илчĕ-ха? Сухатусемсĕр тата намăслăхсăр пусне урăх ним мĕн те илмен! Гондар Итали историне Адуа патĕнчи çапăçава тепĕр хут туса иртнĕ пекех кĕрсе юлать. Римра Италишĕн унтан та кая мар намăсла кунсем çитессе кĕтеççĕ. Юлашки «Цезарь», шăлсăр йытă Муссолини хăй валли хатĕрленĕ мухтавлăх пуçкăшăлĕн пĕр çулçи те юлман. Италин Римра туса хунă Хĕвелтухăç Африкăри колониальнăй империйĕ те Африка пушхирĕнчи хăйăр пекех сапаланса кайрĕ.

ОБОЗРЕВАТЕЛЬ.

(«Правда» хаçатран).

Ассошиэйтед пресс агентстви Америка çар миссийĕн Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи ĕçĕсем çинчен

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен каларнă закона пурнăçа кĕртсе пырас тĕлĕшпе Хĕрлĕ тинĕс районĕнче складсем, доксем, çĕр айĕнчи çулсем тата самолетсем валли анса лармалли площадкăсем йышлăн тума палăртнă. Çак строительствăсене Максуэле генерал ертсе пыракан Америкăн çар миссийĕ пуçарса пырать. Çав миссин задачине Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи чаçĕсене хĕçпăшалсем хăвăрт тăратасси кĕрет.

Англи авиацийĕ Гамбургпа Эмден хулисем çине вăйлăн пырса тапăнни

ЛОНДОН, декабрĕн 1-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, декабрĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Германи порчĕсем çине вĕçсе пырса тапăннă. Бомбардировщиксем Гамбург çине уйрăмах вăйлă тапăннă. Унта уйăх çутатса тăнă вăхăтра 150 тонна ытла бомба пăрахнă. Доксемпе верфьсем çине бомбăсем пуринчен ытларах лекнĕ, унта вăйлă пушарсем тухнă.

Эмден хули çине самолетсем пысăк йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Унта та бомбăсене питех те ăнăçлăн пăрахнă. Çаван пекех Бремерхафенри, Вильгельмсхафенри, Кильри тата Любекри чылай объектсем çине бомбăсем пăрахнă. Неприятель тытса тăракан шывталккишĕсем çине минăсем пăрахнă.

19 бомбардировщик тата çыранри авиацин пĕр самолечĕ хăйсен базисене тавăрăнман.

Çав тапăнура пулнă самолетсен шутĕнчен пăхсан, декабрĕн 1-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пĕтнĕ самолетсен хисепĕ ноябрĕн 8-мĕшĕнче Берлин çине тапăннă чухнехинчен сахалтарах. Авиацин çакăн пек пысăк вăйĕсемпе усă курнă чухне çухатусем ытларах пулассине те кĕтме пулать.

Америка войскисем Голланди Гвианине пырса çитни

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 30-мĕш. Парамарнбона (Голланди Гвиани) Америка войскисемпе хĕçпăшалсем тиенĕ виçĕ транспорт пырса çитнĕ. Çĕнĕ казармăсене туса çитернĕ хыççăн Америка войскисем татах та йышлăн килмелле.

Швецин ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Гюнтер тухса калани

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Швецин оборона членĕсен иртнĕ кунсенче пулнă конференцийĕнче ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Гюнтер сăмах тухса калланă.

Хăйĕн сăмахĕнче Гюнтер çапла каланă: «Пирĕн халăх чăн-чăнах оборонăна хатĕр, вăл Швеци правительствине çĕршывра обществăллă йĕркелĕхĕн чи хаклă пахалăхĕсене çирĕп тытса тăма хавхалантарса пырать. Швеци халăхĕ çапла тăвасшăн: пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем, кирлĕ пулсан, Швеци çĕршывне çеç сыхлачăр, вĕсемпе урăх тĕрлĕ тĕллевсемшĕн ниçта та усă курмалла пултăр. Швеци оборони пĕтĕм Çурçĕр оборонипе мĕн тери çыхăнса тăни çинчен эпĕ каламастăп та. Эпир пĕлетпĕр: правительство оборона тĕлĕшпе тытса пыракан политика тĕрĕс мар, эпир тĕнчери конфликтран пăрăнса юлнипе хамăра тивĕçлĕ историллĕ задачăсене пурнăçа кĕртессинчен пăрăнатпăр, тесе калакан çынсем те пур. Анчах та кун пек каласусене пирĕн халăх ырламарĕ, ырлас та çук. Ютçĕршыв агенчĕсен çак сăмахĕсем, темĕн тери янăравлă пулнн те, пирĕн халăхăн пĕрлĕхне иккĕлентерме пултараймĕ».

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 30-мĕш. (ТАСС). Швецири хаçатсем Гюнтер сăмахĕпе Берлин килĕшменнине палăртса, немĕçсен информаци бюровĕ официальнăй йĕркепе пĕлтерни çинчен пичетлеççĕ. Немĕçсен пĕлтерĕвĕнче çапла каланă пулнă: Гюнтер сăмахĕнчен тухса тăракан тактикăлла ăнланусем Европăри «çĕнĕ йĕрке» çинчен калакан ăнланусемпе килĕшмеççĕ,—тенĕ.

—o—

Ăмăртса ĕçлеççĕ

Шупашкар районĕнче Сталин юлташ доклачĕпе хавхаланнă колхозсем тата колхозниксемпе колхозницăсем хăвăртрах авăн çапса пĕтерессишĕн ăмăртса ĕçлеççĕ. Паянхи кун тĕлне районри 20 колхозра авăн çапса пĕтернĕ.

Авăн çапнă, кĕлте турттарса капана хывнă çĕрте ĕçлекенсене ĕçкунĕсем панисĕр пуçне натурăпа тÿлемелле туни авăн çапассине вăйлатма пулăшрĕ.

«Самолет» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсенче кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ. Колхозниксем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленипе хăйсен нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ, çĕнĕ йĕрке тăрăх кашни сменăра пĕрер килограмм таран тĕштырă илеççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ
химик-специалист
по анализу черных и цветных металлов и
сторож
Обращаться по адресу: Ленинградская, 38.
5—1

ТРЕБУЮТСЯ
СЛЕСАРИ-ВОДОПРОВОДЧИКИ,
ТОКАРИ, РЕВОЛЬВЕРЩИКИ,
ФРЕЗЕРОВЩИКИ (1-го РАЗРЯДА
И ВЫШЕ), ИСТОПНИКИ.
Обращаться:
Ленинградская ул., д. № 38.
—3.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6681.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651. Ф б. 58 84 п. л.